...-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
СЕНТЯБРЬ
24
ВЫРСАРНИКУН
189(684) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне ГОВОРОВА

ЛЕНИНГРАД фрончĕн çарĕсем, наступление вăйлатса пырса, паян, сентябрĕн 23-мĕшĕнче, ПЯРНУ (ПЕРНОВ) хулине— Рига заливĕнчи паха порта туртса илнĕ.

ПЯРНУ хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче ФЕДЮНИНСКИЙ генерал-лейтенантăн, ПОЛЕНОВ генерал-лейтенантăн, ЛЯЩЕНКО генерал-майорăн, БОРЩЕВ генерал-майорăн çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн ОДИНЦОВĂН, артиллери генерал-майорĕн КАЗАКОВĂН, ВОРОНИЧ полковникăн, НОВОЖИЛОВ полковникăн, БАЛЬСИН подполковникăн, ЗАГОРСКИЙ майорăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн БАРАНОВĂН, ПРОЦЕНКО полковникăн, ЛОМОВ подполковникăн, МЕДВЕДЕВ подполковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн РЫБАЛЬЧЕНКĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн САМОХИНĂН, авиаци генерал-майорĕн АНДРЕЕВĂН, МАТВЕЕВ полковникăн, ХАТМИНСКИЙ полковникăн, ГРЕСЬКОВ полковникăн, МЕХАННИКОВ подполковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-лейтенанчĕн БЫЧЕВСКИН, ЦВАНГЕР полковникăн, ОНАЩЕНКО майорăн, ШЕСТАКОВ майорăн, ЖГУН майорăн, АБДУЛОВ капитанăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн КОВАЛЕВĂН, БАХИЛИН полковникăн, ГОЛЕВ полковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă ĕçсенчен палăртса хăварас тесе, ПЯРНУ (ПЕРНОВ) хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче чапа тухнă соединенисемпе чăсsucceeding — ПЕРНОВСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе награлама тăратас.

Паян, сентябрĕн 23-мĕшĕнче, 23 сехетре, пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, çĕр çирĕм тăватă тупăпа вунике хут пĕр харăс персе, Ленинград фрончĕн паттăр çарĕсене, ПЯРНУ хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан çарсене, ПЯРНУ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи сентябрĕн 23-мĕшĕ.

Çĕрулмипе техникăллă культурăсене вăхăтра пухса кĕртер

Тăван çĕршывăн апат-çимĕç пуянлăхĕнче çĕрулми пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çĕрулмине ваттисем иккĕмĕш çăкăр теççĕ. Çавăнпа ăна вăхăтра та пĕр çухатмасăр пухса кĕртни мĕн тери паха ĕç пулса тăни çинчен калама та кирлĕ мар.

Çĕрулмине татккишĕпех кăларма вăхăт çитнĕ ĕнтĕ. Çанталăк типĕ те уяр тăрать. Типĕ çанталăкра кăларнă çĕрулмине хĕлле те усрама лайăхрах—çĕрсе пĕтес хăрушлăх пулмасть. Республикăри малта пыракан колхозсем, çак лайăх çанталăкпа усă курса, çĕрулми кăларса государствăна та парса татнă. Ку колхозсем тăван çĕршывпа фронт умĕнчи ответлăха туйса ĕçлеççĕ.

Анчах, çак ырă хыпарсемпе пĕрлех, районсемпе колхозсенчен ку тĕлĕшпе шухăша яракан сигналсем те килеççĕ. Хăшпĕр çĕрте колхозниксем колхоз ĕçне пăрахсах хăйсен килĕсенчи çĕрулмине кăларма тытăннă. Сăмахран, Шăхасан районĕнчи «Победа» колхозра юлашки вăхăтра кунсерен 15—20-шер çын ĕçе тухмаççĕ. Вĕсем хăйсен пахчи-çимĕçĕсене пухса кĕртме васкаççĕ. Тĕрĕс, килти ĕçсене те тумалла. Анчах колхозăн тем пысăкĕш çĕр лаптăкĕ çинчи çĕрулмипе пахча-çимĕçсем шăнса пăсăлсан, кайрантарах вĕсем юр айне кĕрсе кайсан, колхоза та, колхозниксене те мĕн тери пысăк сиен пулать-ха!

Тÿрех каламалла, хăшпĕр çĕрте колхозниксем колхоз ĕçне пăрахсах хăйсен пахчисене туртăнни колхоз руководителĕсем ĕçе организацилеме пĕлменнинчен килет. Ĕçе тĕрĕс йĕркеленĕ çĕрте, колхозниксем пысăк ушкăнсемпе мар, кашни уйрăм участок çинче ĕçленĕ çĕрте, колхоз председателĕсемпе бригадирсем колхозниксене тĕрĕс ертсе пынă çĕрте пурне те вăхăтра пурнăçа кĕртеççĕ. Кун пек çĕрте ĕç тухăçлă пулать, кашни колхозник кулленхи ĕç нормине ирттерсе тултарса пырать, вăл куллен икĕ-виçĕ çын тумалли ĕçе тăвать, çапла вара колхозăн ĕç алли хутшăнать. Колхоз, хăйĕн членĕсене хавхалантарас шутпа, нормăна ирттерсе тултаракансене ĕçшĕн хушса тÿлет. Кун пек çĕрте вара колхозниксем обществăллă ĕçе те, хăйсен ĕçне те ăнăçлăн ĕлкĕртсе пыраççĕ. Акă, сăмахран, Советски районри Чемейри «Сеятель» колхоз (председателĕ Андреев юлташ) пур ĕçсене те пуçтаруллăн туса пырать. Вăл государствăна пуринчен малтан тырă парса татнă. Кĕлте турттарса капана хывнă. Кантăр татса çапса пуçтарнă, кантăрне — шыва хутнă, вăррине — государствăна панă. Кунта çак кунсенчех çĕрулми кăларса пĕтереççĕ. Колхозниксем хăйсен килĕсенчи ĕçсене пуçтарма пуşанаççĕ.

Çапла ĕнтĕ кашни колхозникĕн, хăйĕн килти ĕçне тума вăхăт пултăр тесен, чи малтан колхоз ĕçне хăвăртрах туса пĕтерессишĕн тăрăшмалла, колхозра икĕ çыншăн, виçĕ çыншăн ĕçлемелле. Вара колхоз пуян пулать, колхоз пуян пулсан—колхозник те пуян.

Анчах хăшпĕр колхозсен председателĕсем тырпул пухса кĕртес ĕçсене пĕрин хыççăн теприне черетпе мар, пурне те пĕр вăхăтрах туса пыма кирлине писпле те ăнланса илеймеççĕ. Çавăн пек руководительсем час-часах: çĕрулми вăл тырпул мар-ха, тăкăнса каймасть, малтан тырпула пухса кĕртмелле, унтан ыттисене тытăнăпăр, теççĕ. Республикăра çĕрулмипе техникăллă культурăсем пухса кĕртес ĕç япăх пынинче çав кая юлнă шухăш-кăмăл палăрса тăрать те ĕнтĕ. Сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне Улатăр, Йĕпреç, Комсомольски, Кувакино, Пăрачкав, Чкаловски, Шăмăршă, Тăвай районĕсенчи колхозсем çĕрулми кăларма тин кăна тытăннă. Алă çитмест, теме пултараççĕ çав районсен руководителĕсем. Анчах сивĕ те йĕпе-сапаллă çанталăк пуçлансан, çĕрулми кăларса пуçтарма ик-виçĕ хут ытларах вăй кирлĕ пулать, çĕрулми пахалăхĕ те хальхи пек пулмасть вара ун чухне.

Çавăн пекех йĕтĕн-кантăра татса пуçтармалли вăхăт та иртсе кайнă темелле. Пĕр вăхăт иртсен, йĕтĕн вăрри тăкăнса пĕтет, кантăр вăррине кайăк-кĕшĕксем тапăнса пĕтереççĕ.

Анчах йĕтĕн чи нумай акса тăвакан Кувакино, Йĕпреç, Улатăр, Хĕрлĕ Чутай, Пăрачкав районĕсем сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне йĕтĕне çурри те татса пуçтарман. Вăрнар, Етĕрне, Çĕмĕрле районĕсем кăна ку енĕпе чылай ăнăçлă ĕçлеççĕ.

Йĕтĕн-кантăр пирĕн условисенче чи паха техникăллă культурăсем пулса тăраççĕ. Çак чĕртавар промышленноçа мĕн тери кирлине кашни çын ăнланать. Çавăнпа та ку ĕç çине районсенчи партипе совет тата çĕрĕç органĕсен тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Йĕтĕн-кантăра татнипе кăна ĕç пĕтмест. Вĕсене çапса, вăррисене лайăх тасатса хурас пулать, тунисене сÿс тума тирпейлес пулать. Çанталăк ăшă чухне йĕтĕне çерем çине сарса пултарма, кантăра шыва хутса пултарма хăвăртрах та апсатрах пулать.

Пирĕн правительство, çак техникăллă культурăсене пысăк вырăна хурса, государствăна йĕтĕн-кантăр тата вĕсен вăррине планран ирттерсе паракан колхозсене пысăк пулăшу парать. ССР Союзĕн Совнаркомĕ йышăннă тăрăх, колхоз обязательство тăрăх тĕштырă парас вырăнне — 4 центнер тĕштырăшăн 1 центнер йĕтĕн-кантăр сÿсĕ пама пултарать. Государствăна планран ирттерсе йĕтĕн-кантăр сÿсĕ панăшăн государство колхоза пусма-таварсем парать. Сăмахран, Елчĕк районĕнчи колхозсем çулсеренех, хăйсен тĕштырă обязательствине тултарас шутпа, государствăна тĕштырă вырăнне кантăр вăрри параççĕ. Çапла вĕсем кăçал та государствăна 35 центнер кантăр вăрри парса, государствăран 70 центнер тулă илнĕ.

Çакăн çинчен колхозниксене тĕплĕн ăнлантарса памалла, вĕсене йĕтĕн-кантăра хăвăртрах пухса кĕртме хавхалантармалла.

Тепĕр пысăк ĕç вăл — махорка касса пуçтарасси. Сивĕсем пуçланчĕç, тăм ÿкет. Тăмпала махорка тути пăсăлать. Анчах махорка касса пуçтарас ĕç япăх пыратьха. Ку ĕçе хăвăртлатмалла, пирĕн фронтовиксемшĕн уйрăмах кирлĕ махоркăна вăхăтра тата пахалăхлăн пухса памалла.

Çĕрулмипе техникăллă культурăсене пухса кĕртнĕ хыççăнах государствăна памалла. Хатĕрлев организацийĕсен уйрăмах çĕрулми йышăнас ĕçре пысăк ответлăха туйса ĕçлемелле. Çĕрулми хурса усрамалли вырăнсем çителĕклĕ таранах хатĕр пулмалла. Колхозниксем нумай вăй хурса çитĕнтернĕ çимĕçе пĕр килограмм та çĕрме памалла мар. Çавăн пекех колхозсенче те çĕрулми хумалли шăтăксене, нÿхрепсемпе подвалсене, тĕпсакайсене лайăх тасатса дезинфекцилес пулать, сивĕ е шыв кĕмелле мар туса питĕрес пулать.

Колхозниксемпе колхозницăсем çине тăрса ĕçлесен, колхоз председателĕсемпе бригадирсем, районри партипе совет тата çĕрĕç органĕсен руководителĕсем ĕçе большевикла ертсе пырсан, эпир çĕрулмипе техникăллă культурăсене вăхăтра та пĕр çухатмасăр пухса кĕртĕпĕр, тăван çĕршывăн апат-çимĕçпе чĕртавар пуянлăхĕсене татах та ытларах ÿстерĕпĕр.

Еççынни депутачĕсен райсовечĕсен исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, тырпул пухса кĕртес ĕçре тухăçлăн та лайăх ĕçленĕшĕн ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

Шăмăршă районĕ тăрăх

25. «Динамо» колхоз (председателĕ Платонов юлташ). Колхоз тырăсене срокчен вырса пĕтернĕ, кĕрхи тырăсене ăнăçлăн акса хăварнă, государствăна тырă парса татнă.

Красноармейски район тăрăх

26. «Жнейка» колхоз (председателĕ Петров юлташ). Ку колхоз тырăсене августăн 23-мĕшĕ тĕлне вырса пĕтернĕ, сентябрĕн 8-мĕшĕ тĕлне вĕсене çапса пуçтарнă, государствăна тырă срокчен парса татнă.

27. «Янмурзино» колхоз (председателĕ Тимофеев юлташ). Вăл 456 гектар тырра срокчен вырса пĕтернĕ, сентябрĕн 8-мĕшĕ тĕлне кĕлтесене капана хывса çитернĕ, государствăна тырă пĕтĕмпех парса татнă.

28. «Красная звезда» колхоз (председателĕ Иванов юлташ). Вăл тырăсене срокчен вырса пĕтернĕ, сентябрĕн 10-мĕшĕнче кĕлтесене капана хывса çитернĕ, государствăна тырă парса татнă.

Шупашкар районĕ тăрăх

29. «Красный партизан» колхоз (председателĕ Шевандов юлташ). Ку колхоз тырăсене августăн 30-мĕшĕ тĕлне пухса кĕртнĕ, сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне вĕсене çапса пĕтернĕ, кĕрхи тырăсене чи лайăх вăхăтра акса хăварнă, государствăна тырă парса татнă.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Ăмăртăва хутшăннă хыççăн

ЭЛĔК, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри предприятисемпе промысла артель коллективĕсем Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. «Самолет» артель коллективĕ Октябрьти плана 110 процент тултарма, продукци пахалăхне лайăхлатма, çĕнĕ производствăсем уçма тата кашни рабочи нормăна тултарса ĕçлеме сăмах панă. Çак кунсенче артельте ата-пушмак юсакан мастерской уçнă. Малтан нормăна тултарайман рабочисем А. Филиппова, Е. Мурзаев, К. Коннов тата ытти юлташсем халĕ нормăна 120 процент тултараççĕ.

Октябрь уйăхĕнчи плана 10 кун малтан тултарма пулнă промкомбинат коллективĕ те ăнăçлăн ĕçлет. Унта стахановецсен йышĕ ÿссех пырать.

Х. ЛИСИН.

Хĕрлĕ ялава алăран вĕçертместпĕр

ÇЕРПУ. Апакассинчи Громов ячĕпе тăракан промысла артелĕ производство планне кашни уйăхрах ирттерсе тултарать. Çапла, вăл хăйĕн планне июль уйăхĕнче 310 процент, август уйăхĕнче 130 процент тултарнă. Кăçал артель уйрăмах колхозсем валли урапа-çунасем тăвас енĕпе лайăх ĕçлет. Урапа-çунасем тăвас плана пĕрмаях ирттерсе тултарать.

1943 çулта производство планне ирттерсе тултарнăшăн артеле Чăваштарпромсоюзăн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне панă. Çав ялава артель коллективĕ паян кунччченех хăй аллинче тытса тăрать.

Нумай пулмасть, артель членĕсем Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнасси çинчен сÿтсе-яврĕç. Вĕсем сентябрьпе октябрь планне 150 процентран кая мар тултарма сăмах пачĕç. Хĕрлĕ ялава кăçал та, хамăр алăран вĕçертместпĕр, теççĕ артель членĕсем.

Виççĕмĕш кварталти плана срокчен тултаратпăр

ЙĔПРЕÇ, сентябрĕн 23-мĕшĕ. (Телефонпа). Пирĕн вăрманпромхоз коллективĕ, Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, çулталăкри плана срокчен тултарма, виççĕмĕш кварталта ĕç тухăçлăхне 5 процент ÿстерме сăмах пачĕ.

Вăрманпромхозри рабочисемпе инженерла-техникла работниксем хăйсен сăмахне чыслăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Халĕ виççĕмĕш кварталти плана тултарасси вĕçленсе пырать. Сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне плана хатĕрлес енĕпе 103 процент, турттарас енĕпе 86 процент тултарнă. Квартал планне эпир срокчен тултарса çитеретпĕр.

Вăрманпромхоз хĕле ăнăçлăн хатĕрленет. Ятарласа организациленĕ бригадăсем çуртсене юсаççĕ. ĕç инструменчĕсене хатĕрлеççĕ. Çав вăхăтрах эпир мастерсен тата рабочисен техникăллă пĕлĕвне ÿстерес тĕлĕшпе чылай ĕçсем тăватпăр.

П. ФЕДОРОВ,
Вăрманпромхоз директорĕ.

Генерал-майор Г. С. Марсельский

* * *

Генерал-майор Георгий Семенович Марсельский—пирĕн чаплă земляк. Вăл Шупашкар районĕнчи Чăкăр ялсоветне кĕрекен Вăрăм Хураскă ялĕнчи чăваш хресченĕ çемьинче çуралса ÿснĕ. Чăваш республики тунă хыççăн Марсельский юлташ нумайччен Шупашкарта ответлă вырăнсенче ĕçлесе пурăнчĕ.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче Хĕрлĕ Çарăн Верховный Главнокомандованийĕ ятарласа панă заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн Г. С. Марсельский генерал-майора СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх 1943 çулхи октябрьте Хĕрлĕ Ялав орденĕ парса наградăланă. СССР Верховный Совет Президиумĕн 1944 çулхи июлĕн 31-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх ăна 1-мĕш степень Отечественнăй вăрçă орденĕ парса наградăланă.

Ленин пурăннă вырăнсенче

В. И. Ленин музейĕн Ленинградри филиалĕн работникĕсем Карели перешейĕкĕнче Разливри тата ытти пунктсенчи асран кайми вырăнсене, 1917 çулта Владимир Ильич пурăнса ĕçленĕ вырăнсене, йĕркене кĕртеççĕ.

Разливра Ленин хÿшши пур. Унта пасмана тасатнă, çулсем çине хăйăр сапса тухнă, çĕнĕ касăсем тунă.

Ленин пĕр вăхăтра пытанса пурăннă сарая юсанă. Çав участок тавра хÿме тытса çавăрăннă. Сарая пур енчен те хÿтĕлеме футляр тăвасшăн, унăн проектне халь хатĕрлеççĕ.

Ленинградра та Ленин пурăннă хваттерсене, сăмахран, 10-мĕш Советски тата Херсонски урамсенчи хваттерсене, юсама тытăннă. Ильич переулокĕнчи хваттере тĕпренех юсамалла пулать. (ТАСС).

Электричествăллă музыка инструменчĕсем

Нумаях пулмасть Мускаври консерваторин Пысăк залĕнче электричествăллă музыкăн çĕнĕ инструменчĕсене, «Эмиритон» тата «Электара» ятлăскерсене, кăтартнă. Çав инструментсене Ленинградри музыкант А. Иванов А. Римский-Корсаковпа (вырăссен аслă композиторĕн ывăлĕн ывăлĕпе) пĕрле шухăшласа тунă.

Электричествăллă музыкăна малалла аталантарас ĕçе пысăка хурса, СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство ĕçĕсен комитечĕ электричествăллă инструментсене шухăшласа тăвакан конструкторски бюро тума йышăннă. Çав бюро начальникне «Эмиритон» ятлă инструмента шухăшласа кăларакан А. Иванова лартнă.

Мускаври консерваторире музыкăн хăйне уйрăм класне тунă. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

СЕНТЯБРĔН 22-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

ЛЕНИНГРАД фрончĕн çарĕсем, çав тери хăвăрт наступлени туса пырса, сентябрĕн 22-мĕшĕнче Балтика тинĕсĕ хĕрринчи паха тинĕс-çар базипе пысăк порта—Совет Эстонин столицине ТАЛЛИН (РЕВЕЛЬ) хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата халох пурăнакан ытти 800 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ТАПА хулипе чугун çул узелĕ, ПАЙДЕ хули, ПЫЛЬТСАМА хули, КУНДА, ХАЛЬЯЛА, КУСАЛУ, КАБЕРЛА, КЕХРА, ЛЭХТСЕ, ЯРВА-МАДИСЕ, ЯРВА-ЯНИ, ПЕТРИ, КОЙГИ, ЯРАВЕРЕ, РЯСНА, ВИТСЯРВЕ ятлă пысăк ялсем тата КИЛТСЫ, ТАМСАЛУ, НЫМКЮЛА, ЯНЕДА, АЭГВИДУ, МУСТЙОЕ, КЕХРА ятлă чугун çул станцийĕсем.

ВАЛГА хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем халăх пурăнакан 60 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — РАНДА, РИЙДАЯ, АЛА, КУРЕ, ШАЛДЕРИ, ДАКСТЫ, ТУРНА ятлă пысăк ялсем тата ОМУЛИ ятлă чугун çул станцийĕ.

САНОК хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа хытă çапăçнă хыççăн 30 ял ытла туртса илнĕ, вăл шутра — ЖЕРНИЦА, ВОЛКОВЫЯ, БУКОВЕЦ, ТЕРКА, РАЙСКЕ, СОКОЛЕ, ТЕЛЕСНИЦА ОШВАРОВА, ПОЛЯНА, ЧАРНА, ГАЛЮВКА, МШАНЕЦ, ПЛОСКОЕ ятлă пысăк ялсем.

Румынин хĕвеланăç пайĕнче пирĕн çарсем, Румыни çарĕсемпе пĕрле кĕрешсе, АРАД хулипе пысăк чугун çул узелне туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ШЕПРЕУШ, ПЭДУРЕНЬ, ШИМАНДУЛ, СФЫНТА-АНА, ГАЙ, АРАДУЛ-НОУ, ФЕЛНАК, МАЙЛАТ, ТЕМЕСКЕНЕ ятлă пысăк ялсем тата НЭДАБ, ШИМАНДУЛ, СФЫНТА-АНА, КЕРЕМИДЕРИА, ГЛОГОВЭЦ, АРАДУЛ-НОУ, ЗАДЕРЛАК, ФЕЛНАК ятлă чугун çул станцийĕсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Сентябрĕн 21-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 62 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 12 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ НИМĔÇСЕН ТАЛЛИН (РЕВЕЛЬ) ПОРТĔНЧИ ТРАНСПОРЧĔСЕНЕ ТАПĂННИ

Сентябрĕн 21-мĕшĕнче каçхине тата сентябрĕн 22-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕпе инçене вĕçекен авиаци нимĕçсен Таллин (Ревель) портĕнчи транспорчĕсене тапăннă. Тапăну вăхăтĕнче портра нимĕç çарĕсем ларнă транспортсем нумай пулнă. Бомбăсем тÿрех пырса тивнипе нимĕçсен виçĕ пысăк транспортне тата хурал караппне путарнă. Унсăр пуçне тата портран тухса кайма тăнă пĕр судно çинче пушар тухнă: кăшт вăхăт иртсен, çав судно çинче питĕ вăйлă взрыв пулнă. Нимĕçсен виçĕ транспортне, пĕр тральщикне тата ытти суднисене те сиенленĕ.

☆ ☆ ☆

Ленинград фрончĕн çарĕсем вирлĕн наступлени туса пынă. Пирĕн чăсесем Тапа хулипе паха чугун çул узелне атакăланă та туртса илнĕ. Тапа хулинче нимĕçсенчен 60 тупă, пулеметсем нумай, çар хатĕрĕсем тиенĕ 5 чугун çул эшелонне, боеприпассен, çыхăну пурлăхĕн тата ытти çар япалисен 10 пысăк складне тытса илнĕ. 300 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ. Тăшман хушăри оборона позицийĕсенче чарăнса тăма çав тери тăрăшнă. Анчах та совет чаçĕсем, ăста та татăклăн çапăçса, нимĕçсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă. Пирĕн танкистсемпе пехотинецсем малалла ыткăннă, хăйсен çулĕ çинче тĕл пулакан тăшман колоннисемпе обозсене аркатса пынă. Малалла çав тери хăвăрт кайса, пирĕн çарсем Таллин хулине вăркăнса кĕрсе кайнă. Тăшманăн çакна кĕтмен гарнизонĕ, сехри хăпса тухнипе, пăтрашса кайнă. Ленинград фрончĕн çарĕсемпе эстонецсен Пэрна генерал-лейтенант ертсе пыракан корпусĕ урамсенче çапăçнă хыççăн Совет Эстонин столицине Таллин хулипе портне, Балтика тинĕсĕ хĕрринчи паха тинĕс-çар бази пулса тăраканскерне, фашистла нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă.

* * *

Валга хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чаçĕсем пĕр шурлăхлă районран çурçĕр енĕпе кăнтăр енчен иртсе кайнă та нимĕçсене Ала ялĕнчен хăваласа кăларнă. Каялла чакакан тăшман çапăçу хирĕнче хăйĕн салтакĕсемпе офицерĕсен 300 виллине ытла пăрахса хăварнă. Валга хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем артиллери илсе пынă та нимĕçсен укрепленийĕсене вăйлăн персе çĕмĕрме пуçланă. Кун хыççăн тăшмана совет пехотинецĕсемпе танкисчĕсем атакăланă. Тăшман çапăçăва çĕнĕ çарсем кĕртсе янă, Седа шывĕ çинчи позицисенче чарăнса тăма хăтланнă. Пирĕн çарсем çав шыв урлă каçнă та Валмиер хулипе чугун çул узелĕнчен 25 километрта ларакан Дакcты местечкине туртса илнĕ.

Пирĕн авиаци çĕр çинчи çарсене тăшманпа çапăçма хытă пулăшса пынă. Совет летчикĕсем нимĕçсен темиçе танкне, 14 туппине, 3 бронетранспортерне, çар хатĕрĕсем турттарса пынă 159 автомашинине пĕтерсе тăкнă, 4 боеприпас складне тата пĕр горючи складне сирпĕнтерсе янă. Сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 6 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Санок хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тăшман çÿллĕ вырăнсенче вăйлă укрепленисем тунă. Нимĕçсен пехоти, танксемпе хăй тĕллĕн çÿрекен тупăсем пулăшнипе, темиçе хутчен те контратака тунă. Тăшман контратакисене сире-сирĕ ярса тата унăн тĕп вăйĕсене çав вырăнта çыхлантарса тăрса, совет чаçĕсем аякран кайса çавăрса илмелли маневр тунă та нимĕçсен хирĕç тăмалли узелне флангсенчен атакăланă. Хаяр тытăçу хыççăн тăшман васкасах каялла чакнă. Нимĕçсен 101-мĕш горнострелковăй дивизийĕнчи 228-мĕш пехотнăй полка аркатса тăкнă. 12 тупăпа миномет, 44 пулемет, боеприпассен 2 складне тата инженери пурлăхĕн пĕр складне тытса илнĕ. 230 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Тыткăна илнисем хушшинче—нимĕçсен 228-мĕш полкĕн командирĕ тата штаб офицерĕсен пĕр ушкăнĕ.

* * *

Румынин хĕвеланăç пайĕнче пирĕн çарсем, Румыни çарĕсемпе пĕрле кĕрешсе, Арад хулине туртса илнĕ. Çак хулашăн пынă çапăçусенче Германипе Венгри çарĕсене çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухату тÿстернĕ. Арад хули—Румынин пиллĕкмĕш пысăк хули пулса тăрать, вăл—пысăк промышленность центрĕ. Арад хулинче пир-авăр фабрикисем, вагонсем тăвакан завод, тар завочĕ тата апат-çимĕç туса кăларакан предприятисем пур. Ку хула Румынипе Венгри чиккинчен 16 километрта ларать. Тепĕр районра пирĕн çарсем, малалла куçса пынă май, халăх пурăнакан чылай пунктсене туртса илнĕ. Нимĕçсемпе венгерсен 600 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

* * *

Остроленка хулинчен хĕвеланăçнерехре советсен 4 штурмовикĕ, Васин лейтенант командир пулса ертсе пынипе, нимĕçсен эшелонне тупнă та çавăнтах атакăланă. Пĕрре анса тапăнсанах совет летчикĕсем эшелон паровозĕпе темиçе вагонне вут тивертсе янă. Кун хыççăн тунă атакăсенче танксем турттарса пыракан платформăсене вут тивертсе янă. Часах çавăнта Давиденко старши лейтенант командир пулса ертсе пыракан штурмовиксен ушкăнĕ пырса çитнĕ. Вĕсем вара нимĕçсен эшелонне йăлтах пĕтерсе тăкнă. Танксем турттарса пыракан 15 платформăна, горючи цистернине тата çар хатĕрĕсем тиенĕ темиçе вагона çĕмĕрсе тăкнă е çунтарса янă.

* * *

Çурçĕр флочĕн авиацийĕ Баренц тинĕсĕпе Варангер фиордĕнче нимĕçсен пĕтĕмĕшпе 11 пин тонна таякан икĕ транспортне шыва путарнă.

Республика уйхирĕсенче

1944 ÇУЛХИ СЕНТЯБРĔН 20-МĔШĔ ТĔЛНЕ РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ ТЫРПУЛСЕНЕ ВЫРСА ПУХАС ТАТА КĔРХИ ÇĔРТМЕ ТĂВАС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Тырă вырса пухнă	Капана хывнă	Çапнă	Кĕрхи çĕртме тунă
Вăрнар	100,0	89,1	58,7	13,0
Красноармейски	100,0	97,1	55,8	39,1
Канаш	100,0	80,9	63,7	22,8
Советски	100,0	86,6	54,4	17,6
Вăрмар	100,0	81,2	51,2	25,3
Чурачăк	100,0	98,9	59,8	57,6
Етĕрне	100,0	85,2	46,9	16,5
Елчĕк	100,0	82,4	45,2	15,0
Муркаш	100,0	82,5	57,1	38,8
Октябрьски	100,0	84,7	48,7	34,3
Ишлей	100,0	71,2	60,1	26,4
Йĕпреç	100,0	71,9	50,8	5,5
Шăхасан	99,9	91,2	62,4	22,7
Элĕк	99,9	70,1	55,5	34,4
Сĕнтĕрвăрри	99,8	84,4	56,5	22,4
Комсомольски	99,7	74,2	43,8	6,8
Шупашкар	99,7	85,3	58,0	26,8
Сĕнтĕр	99,5	79,4	58,5	24,2
Куславкка	99,4	76,2	52,0	31,2
Тăвай	99,0	66,3	45,3	11,1
Чкаловски	98,9	76,3	39,1	10,9
Пăрачкав	98,8	73,1	50,0	3,3
Çĕрпӳ	98,6	85,9	60,6	29,5
Калинино	97,8	90,2	54,0	33,1
Хĕрлĕ Чутай	97,8	67,3	44,4	6,9
Первомайски	96,9	69,3	49,7	3,4
Çĕмĕрле	91,9	77,6	55,1	5,0
Шăмăршă	91,4	75,7	52,6	14,5
Улатăр	88,5	73,1	46,7	6,6
Кувакино	76,6	74,2	54,1	1,3
Шупашкар хули	100,0	96,1	89,0	36,0
Канаш хули	90,0	92,0	53,9	—

ПЛАНА ТУЛТАРНĂ КОЛХОЗСЕМ ÇИТЕС ÇУЛШĂН ТЫРĂ ПАРАÇÇĔ

МУРКАШ, сентябрĕн 23-мĕшĕ. (Телефонпа). Юлашки вăхăтра государствăна тырă парас ĕçĕн хăвăртлăхĕсем чылаях ӳсрĕç. Районри колхозсем сентябрĕн 22-мĕшĕ тĕлне тырă памалли плана 84 процент тултарчĕç.

Колхозсем хушшинчи социализмлă ăмăртура мала тухассишĕн кĕрешсе, сахал мар колхозсем хăйсен планне пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртсе çитерчĕ. Тырă памалли плана паянхи куна 40 колхоз тултарнă. Орининăри «Красное Сормово» колхоз кăçалхи обязательствăсене пурнăçа кĕртнĕ хыççăнах 1945 çулшăн аванс шучĕпе тырă пама пуçларĕ. Ку таранччен вăл çитес çулшăн 61 центнер тырă панă. 1945 çулшăн аванс шучĕпе Хăймалакасси ялсоветĕнчи Жданов ячĕпе тăракан колхоз 45 центнер, «Крестьянин» колхоз 27 центнер тырă панă.

Çав вăхăтрах хăшпĕр колхозсем государствăна тырă парас ĕçе ним сăлтавсăрах вăраха хăварса пыраççĕ. Кашмашри «Свобода» колхозăн тырра инçене леçмелле мар, ялти складсенех хывмалла. Апла пулин те вăл графика пурнăçа кĕртсе пымасть. Колхозăн государствăна 602 центнер тырă памалла. Колхоз председателĕ Петровский юлташ Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илнĕ чухне государствăна тырă памалли плана сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне тултарма пулчĕ. Анчах унăн сăмахĕ пурнăçа кĕмест-ха.

Çавăн пекех «Новая жизнь» колхоз та (председателĕ Ефремов юлташ) графика тивĕçлипе пурнăçа кĕртсе пымасть. Ку таранччен графикпа палăртнинчен 550 центнер сахалтарах леçнĕ. Кун пек колхозсем районра татах та пур-ха.

Колхозниксен салючĕ

Колхоз председателĕ Николай Петухов письмоносецран çĕнĕ хаçатсем илнĕ хыççăнах тырă вырнă çĕре васканă. Вăл хире çитнĕ вăхăтра колхозниксем апатланнă пулнă.

Председатель вĕсен çывăхнерех ларнă та хаçат вулама пуçланă. Унта Мускав хамăрăн паттăр çарсене, тăван çĕршывăн хулисемпе ялĕсене ирĕке кăларакансенсене, салют пани çинчен пĕлтернĕ.

— Эпĕ çапла шутлатăп: пирĕн те, колхозниксен, ялхуçалăх ĕçне вăхăтра ирттернипе мухтавлă Хĕрлĕ Çара салют памалла,—тенĕ фронтовик арăмĕ.

Ку сăмаха пурте хапăл туса йышăннă. Тепĕр кунне каçхине, 9 сехетре, ыраша пĕтĕмпех, планпа пăхнинчен 2 кун малтан, вырса пĕтернĕ. Колхозниксем çурлисене çӳлелле çĕклесе савăннă.

Ыраш вырса пĕтернĕ хыççăнах çынсемпе машинăсене суртырисем вырнă çĕре куçарнă. Колхозниксем çуртырисене планпа пăхнинчен 4 кун малтан вырса пĕтернĕ.

Уйри кĕлтесене пĕтĕмпех итем çине кĕртнĕ. 4 лаша вăйлĕ молотилка çĕрĕнкунĕн ĕçлет. Икĕ сменăпа авăн çапаççĕ. Çуртырисене çапса пĕтернĕ. Колхозниксем, инçетри фронтра çĕр çывăрмасăр çапăçакан тăвансем çинчен асра тытса, ĕçре ывăнма пĕлмеççĕ.

Колхозниксем кантăра вăхăтра татса пуçтарчĕç, клевера та çапса пĕтернĕ.

Агитаторсем: Н. Ермеев, А. Арсентьева тата ытти юлташсем колхозниксене фронтри лару-тăру çинчен тĕплĕн ăнлантарса параççĕ. Уборка вăхăтĕнче 8 номер стена хаçачĕ тата боевой листоксем кăларнă. Кунта ăмăрту хăми те пур. Куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавсем тунă.

Кĕраки планне ытлашшипех тултарнă, халĕ хĕрсех кĕрхи çĕртме тăваççĕ. Колхозра ытти ĕçсем те кая юлман. Кунта нормăна тултарман колхозниксем пачах та çук.

... Каçалапа транспорт бригади хатĕрлев пунктĕнчен çитрĕ. Бригадир Н. Яковлев председатель патне пырса çапла пĕлтерчĕ:

— Эпир государствăна тырпул памалли обязательствăна пĕтĕмпех тултартăмăр. Хĕрлĕ Çарăн тырă фондне 38,64 центнер панă.

Çапла салют параççĕ колхозлă ялăн çыннисем наступлени туса пыракан Хĕрлĕ Çара. Ку ялта Совет Союзĕн Геройĕ Федот Орлов çуралса ӳснĕ.

— Ан тив, Геройăмăр та мухтантăр хăйĕн тăван ялĕпе!—теççĕ колхозниксем.

Яков СИГАЙ.
«Большевик» колхоз, Советски район.

МТС-ăн колхозсене молотилкăсемпе ĕçлеме пулăшмалла

КӲКЕÇ, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (Телефонпа). Шăнкас ялсоветне виçĕ колхоз кĕрет. Вĕсем пурте районра чи кая юлнă колхозсем пулса тăраççĕ. Халĕ уйрăмăнах авăн çапас ĕç сӳрĕккĕн пырать. Çавна пула ĕнтĕ çак колхозсем государствăна тырă памалли графика пăсаççĕ. Кунта паянхи куна çитсе те пурĕ 33,7 процент чухлĕ çеç авăн çапнă. Колхозсенче молотилкăсем те çук мар. Анчах вĕсемпе тухăçлăн ĕçлеймеççĕ. Машинăсем час-часах çĕмĕрĕлсе каяççĕ.

Калас пулать, МТС хăй енчен колхозсене молотилкăсемпе ĕçлеме кирлĕ пек пулăшу памасть.

М. НИКИТИН.

Ӳкерчĕк çинче: Чурачăк районĕнчи «Новая сила» колхозăн малта пыракан бригадирĕсем Ф. Карпова (сулахайри) тата У. Трофимова (сылтăмри).
Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

КОМСОМОЛ ПУРНĂÇĔ

Якаткассинчи комсомол организацинче

1. ЙЫШĂННĂ ТА... МАННĂ

Вăрнар районĕнчи комсомолецсемпе çамрăксем вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе республикăри комсомолецсемпе çамрăксене чĕнсе калани Якаткасси ялĕнчи çамрăксем патне те çитнĕ. «Лайăх чĕнӳ, вырăнлă пуçару,—тенĕ кунти комсомолецсем,—ку ĕçе пирĕн те хутшăнас пулать». Çак ыйтупа вĕсем хăйсен сайра хутра пулакан пухăвне пухнă. Пуху шавлăн иртнĕ: калаçнă, сӳтсе-явнă. Вăрнарсен чĕнĕвĕ çине ответлесе, вăйлă тырпул туса илмелли звено организациленĕ. Звенона ертсе пыма комсомол организацин секретарьне Борис Максимова суйланă.

Унтанпа вăхăт самаях иртрĕ ĕнтĕ. Колхозсем вăйлă тырпул пăхса çитĕнтерчĕç. Халĕ вĕсем ăна ăнăçлăн пухса кĕртеççĕ. Пĕлесчĕ, Якаткасси комсомолецĕсен тырри мĕнле-ши?

ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Раиса Семенова кĕтнĕ тăрăх, тырпул вăйлă пулмалла. «Ячĕ те вăйлă тырпул туса илмелли звено та, урăхла мĕнле пултăр-ха», тет вăл.

Эпĕ, çак звено тыррине курма тесе, Якаткассине кайрăм.

Колхоз правленине пальтоне йӳле янă, картусне чалăш лартнă çамрăк кĕрсе тăчĕ. Вăйлă тырпул туса илекен звенон руководителĕ Максимов юлташ пулнă иккен ку.

— Каласа парăр-ха, Максимов юлташ, мĕнле ĕçлерĕ сирĕн звено?—ыйтатăп эпĕ.

Çăварĕнчи мăйăр хупписене сурса кăларса:

— Мĕнле звено?—хирĕç ыйту парать мана Максимов.

Эпĕ ăна хăйĕн звени çинчен аса илтеретĕп.

— А-а-а, манăн звено?.. Виçĕ гектар çĕр уйăрса илнĕччĕ...

— Вара?

— Вара...

Максимов урăх нимĕн те калаймарĕ. Каламалли те çук. Йышăннă та... маннă.

Чăннипе, çĕрне те уйăрса илмен, сухине те туман, акине те акман. Вăрнарсем чĕнсе калани çине якаткассисем пуш сăмахпа ответленĕ.

Ахалĕх кĕтет Семенова юлташ Якаткассинчи комсомолецсем вăйлă тырпул туса илессе. Кĕтсе лараччен, тĕрĕслесе тăрса, ĕçлеттерес пулнă вĕсене. Анчах район центрĕнчен 10 çухрăмри Якаткасси организацине райком секретарĕ çур çул хушшинче те пĕр хутчен кайса курман.

2. БИЛЕТСĂР «КОМСОМОЛЕЦСЕМ»

Çак организацире 12 комсомолец шутланать. Вĕсенчен тăваттăшĕн билетсем çук. Яков Егоровпа Анна Никифорова çамрăксене комсомол ретне çак çулхи апрелĕн 25-мĕшĕнче илнĕ. Амур Арсентьевпа Зоя Ивановăна иртнĕ çултах илнĕ. Унтанпа вĕсем билетсăрах çӳреççĕ. Мĕн пирки?

— Пире никам та билет илме пыма каламан,—ответлеççĕ вĕсем.

Райком секретарĕ Семенова юлташ, çак айăпа хăй çине илсе: «Параймарăмăр-çке çавсене билет», тет.

Райкомра билетсем çителĕклех пулнă. Кунсем, уйăхсем иртнĕ, анчах Семенова юлташ билетсĕр комсомолецсем çинчен аса та илмен. Билетсăрăисем вара канлĕ пурăннă. Вĕсене ĕç хушма мар, член укçине те илмен.

— Илмен çав, билет çук та, мĕн çине ал пусса парас,—тет Максимов.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XII-мĕш пленумĕ вырăнти организацисене ертсе пырас ĕç çине çиелтен тата пĕтĕмĕшле пăхассине пĕтерес тĕлĕшпе çирĕп решени йышăнса хăварчĕ. Анчах та ВЛКСМ Советски райкомĕ пленум решенийĕ хыççăн та пуçламĕш организацисене конкретлă, оперативлă ертсе пырас тата вĕсене пулăшу парас ĕçе лайăхлатман.

Т. ИВАНОВ.
(Хамăр корр.).

Театрăн çуллахи ĕçĕсем

Чăвашсен государство академи театрĕн бригадисем виçĕ уйăх çурă ытла гастрольре пулчĕç. Çав вăхăтра вĕсем республикăри 17 районри 238 колхозра пулнă. 272 спектакль лартса панă. Çак спектакльсене пурĕ 74.000 çын ытла курнă. Кунсăр пуçне, бригадăсем тырпул хатĕрлемелли пунктсенче концертсем панă тата ялти художествăллă пултарулăх кружокĕсене пулăшас тĕлĕшпе чылай ĕçсем тунă.

Кăçалхи гастрольсем ăнăçлăн та йĕркеллĕн иртрĕç. Бригадăсен коллективĕсем, пĕр-перинпе ăмăртса ĕçлесе, хăйсен умне лартнă задачăна начар мар пурнăçа кĕртрĕç. Репертуарта М. Мранька çырнă «Сержант Ванюшин» драма тата пĕр актлă комедисемпе драмăсем пулнă. Бригадăсен коллективĕсем çав произведенисене художество тĕлĕшĕнчен пысăк мастерлăхпа кăтартса пама пултарчĕç. Куракансем уйрăмăнах халăх артистне Борис Алексеева, чăвашсен тава тивĕçлĕ артисчĕсене Урганкина, Молодова, Семенова, Айзмана тата Ырзем юлташа, артистсене Фадеева, Сперанскиие, Васильевăна тулли кăмăлпа ырласа кĕтсе илчĕç.

Гастрольрен таврăннă хыççăн академи театрĕн коллективĕ хĕллехи сезона уçма хатĕрленме тытăнчĕ. Хĕллехи сезона театр коллективĕ Вильям Шекспир çырнă «Отелло» трагедипе уçать. Хĕллехи сезонри ĕçсем пĕтĕмпех Чăваш автономийĕ 25 çул тултарнине хатĕрленессипе çыхăнса тăраççĕ. Çавăнпа та хĕллехи сезона ăнăçлăн ирттерес тесен, театр коллективĕн нихăçанхинчен те ытларах тимлĕн ĕçлемелле пулать.

Л. РОДИОНОВ.

СПОРТ

Физкультура обществисен ăмăртăвĕ

Сентябрĕн 17—20-мĕшĕсенче Шупашкарта физкультура обществисен çăмăл атлетика ăмăртăвĕ тата кимĕпе ишес тĕлĕшри ăмăртăвĕ пулса иртрĕ.

Спортăн уйрăм енĕсемпе ăмăртура çак юлташсем лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕç: арçынсенчен Солдатченко юлташ («Сталинец») 100 метра 13 секундăра, хĕрарăмсенчен Маркова («Буревестник») çав дистанцинех 14,2 секундăра чупса тухса пĕрремĕш вырăн йышăнчĕç. Иккĕмĕш вырăна Панова юлташ йышăнчĕ. Печневский юлташ («Большевик») гранатăна чи инçете (50 метр) ывăтрĕ. Хĕрарăмсенчен Гущина («Буревестник») гранатăна 42 метр та 60 сантиметр ывăтрĕ. Вăлах çӳле сикессипе, сăнă ывăтассипе, 1000 метра чупса тухассипе мала тухрĕ. Арçынсен шведски эстафетинче «Спартак», тăватшарăн 200 метра чупса тухмалли эстафетăра «Сталинец» обществисем мала тухрĕç. Хĕрарăмсен шведски эстафетинче «Буревестник» обществи çĕнтерчĕ. Кимĕпе ишес тĕлĕшпе хĕрарăмсенчен Самойлова («Спартак») мала тухрĕ, вăл пĕр километра 7 минута та 54 секундăра ишсе тухрĕ. Арçынсенчен Солдатченко («Сталинец») 2000 метра 13 минута та 44,5 секундăра ишсе тухрĕ. Иккĕмĕш вырăна Тихонов юлташ йышăнчĕ.

Командăсен ăмăртăвĕнче пĕрремĕш вырăна «Сталинец», иккĕмĕш вырăна «Спартак», виççĕмĕш вырăна «Буревестник» обществисем йышăнчĕç. Хĕрарăм командисенчен малти вырăна «Буревестник» обществи йышăнчĕ.

Ăмăртура мала тухнă физкультура обществисемпе уйрăм физкультурниксене физкультурăпа спортăн республикăри комитечĕн Хисеплĕ грамотине тата хаклă парнесем параççĕ.

* * *

Çак кунсенче Шупашкарти «Азот» спорт обществин стадионĕнче «Сталинец» командипе «Азот» команди тĕл пулса футболла вылярĕç. Футбол вăййи 1:0 шутпа, «Сталинец» команди çĕнтернипе пĕтрĕ.

РЕГЕНТ СОВЕЧĔН ЧЛЕНĔСЕМ ПУЛНĂ ÇЫНСЕНЕ—ФИЛОВĂ, КИРИЛЛ КНЯЗЕ ТАТА МИХОВ ГЕНЕРАЛ-ЛЕЙТЕНАНТА, ÇАВĂН ПЕКЕХ ТАТА ГЕРМАНИН БОЛГАРИРИ МИССИЙĔПЕ МУССОЛИНИН «МИССИНЕ» АРЕСТЛЕНĔ

Болгарири совет çарĕсен командованийĕ çак çынсене арестленĕ: 1. Б. Филова; 2. Кирилл князе; 3. Н. Михов генерал-лейтенанта; 4. Болгарин премьер-министрĕ пулнă Д. Божилова; 5. министр пулнă Васильева; 6. Германин Болгарири посланникне А. Г. Беккерле; 7. Германи посланникĕн заместительне А. Мормана; 8. Германин çар атташин помощникне фон В. Б. Гюльзена; 9. Германи миссийĕн атташине Г. В. Перцгена; 10. Германи миссийĕн атташине П. Виттера; 11. Муссолини «миссийĕн» генеральнăй консулне К. Симена; 12. Çав «миссин» атташине К. Делюра; 13. Çав «миссин» атташин помощникне Г. Грациана.

ГЕРМАНИПЕ ВЕНГРИН РУМЫНИРИ МИССИЙĔСЕН ТАТА МУССОЛИНИ «МИССИЙĔН» ПРЕДСТАВИТЕЛĔСЕНЕ АРЕСТЛЕНИ

Германи командованийĕн Румынири маларах арестленĕ представителĕсемсĕр пуçне (ун çинчен сентябрĕн 19-мĕшĕнче пĕлтернĕччĕ), Румынири совет çарĕсен командованийĕ тата çаксене арестленĕ: 1) Германин çар атташине К. Шпальке генерал-майора; 2) Германин хирти комендатурин Черновод хулинчи комендантне фон Чаммер унд Э. Остен генерал-майора; 3) Германин çар миссийĕ штабĕн начальникне А. Дитель полковника; 4) Германи миссийĕн пĕрремĕш советникне В. Ределе; 5) Германи миссийĕн советникне Г. Штельцера; 6) çав миссин полици тĕлĕшпе ĕçлекен атташине Г. Рихтера; 7) Муссолини «миссийĕн» пуçлăхне А. А. Одениго посланника; 8) çав «миссин» пуçлăхĕн заместительне Ф. И. Трандофилона; 9) çав «миссин» генеральнăй консулне Р. Э. Тоцине; 10) Венгри ĕçĕсен поверенннăйне А. Е. Метиеши-Шварца; 11) Венгри миссийĕн çар атташине А. Л. Барта полковника.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ сентябрĕн 22-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Союзниксен çарĕсем Неймеген урлă çурçĕрелле куçса пыраççĕ, тăшман вĕсене хирĕç хытăрах тăрса çапăçма пуçланă. Союзниксен бронетанковăй вăйĕсем Неймегенри кĕпере тытса илнĕ хыççăн авиадесант чаçĕсемпе пĕрле Вааль шывĕн çурçĕр хĕррине çитнĕ, унтан каллех çурçĕрелле куçса пынă. Неймеген хулине тăшмантан тасатнă.

Союзниксем тăшман тăракан вырăна татса кĕнĕ савăлăн никĕсне Эйндгофенран инкĕ еннелле те аслăлатнă. Союзниксен çарĕсем çакăнтан хĕвелтухăçнерехре ларакан Сомерен хули патне çитнĕ, халĕ вĕсем тăшманпа кунтан хĕвеланăçнерехре ларакан Вингельрер хули районĕнче çапăçаççĕ.

Шельда шывĕ вăрри районĕнче союзниксен çарĕсем Термезен хулине туртса илнĕ, Леопольд каналĕнчен хĕвелтухăçнерехре тăшмантан Шельда шывĕн кăнтăр çыранне тасатаççĕ.

Германи чикки урлă Кăнтăр Голландирен каçса кайнă союзниксен çарĕсем Гейленкирхен хулинчен 3 миля малалла кайнă. Аахен хулинчен хĕвелтухăçнерехри Штольберг хулипе Бюзбах хули районĕнче союзниксен çарĕсем кунти çĕршыва тăшмантан тасатаççĕ, халĕ вĕсем Штольберг хули урамĕсенче çапăçаççĕ.

Сентябрĕн 21-мĕшĕнче вăтам бомбардировщиксем Германири Эранг, Герольштейн тата Пронсфельд хулисенчи чугун çул станцийĕсене атакăланă.

ЛОНДОН, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс тавралĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ сентябрĕн 22-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Союзниксен çарĕсем Римини хулине йышăннă. Ку хулана туртса илни союзниксен çарĕсене малалла çапăçма пысăк май туса парать, мĕншĕн тесен вăл По шывĕн улăхне кĕрсе каймалли вырăнта ларать.

Американецсен 5-мĕш армийĕ Аппенин тăвĕсен çурçĕр-хĕвелтухăç пайĕнчи çулсен паха узелне Фиренцуола хулине туртса илнĕ.

Йывăр бомбардировщиксен соединенийĕсем ĕнер тăшманăн Венгрири тата Югославири çулйĕрĕсене пыра-пыра тапăннă.

Союзниксен авиацийĕ çавăн пекех тата Греципе Албанире çапăçнă.

ГЕРМАНИН БРЕСТ ПОРТĔНЧИ ГАРНИЗОНĔН НАЧАЛЬНИКНЕ ТЫТКĂНА ИЛНĔ

ЛОНДОН, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Германин Брестри гарнизонĕн начальникне Бернард Рамке генерала тыткăна илсе, сентябрĕн 21-мĕшĕнче Англие илсе çитернĕ.

Унпа пĕрле унăн штабĕнче ĕçленĕ темиçе офицера та илсе çитернĕ.

Югославири çапăçусем

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕ çапла пĕлтернĕ: Хĕвеланăç Сербире Югослави чаçĕсем çине тăрсах наступлени туса пыраççĕ, вĕсем Крупань хулине ирĕке кăларнă. Рудник секторĕнче ирĕклĕх çарĕн чаçĕсем Горни Милановац хулине туртса илнĕ. Тăшман салтакĕсене нумай вĕлерсе тăкнă, чылайĕшне тыткăна илнĕ. Трофейсем нумай тытса илнĕ. Криви Вир хули патĕнче Югослави чаçĕсем тăшманăн пысăк группировкине аркатса тăкнă, халĕ тăшмана Парачин еннелле хăваласа пыраççĕ.

Черногорире область центрĕ пулса тăракан Никшич хулине тата Андреевица хулине ирĕке кăларнă. Нимĕçсен Черногорири çарĕсемпе Герцеговинăри çарĕсем хушшинчи çыхăнăва пĕтĕмĕшпех татнă.

Далмацире Пелешац çурутравĕ çинче тăшманăн питĕ вăйлă тĕреклетнĕ Трпана пунктне туртса илнĕ.

Словенире Югослави чаçĕсен хăватлă наступленийĕ пырать. Дарувар хулипе Плетерница хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата Забок пункчĕпе Вировац пунктне йышăннă.

Словакири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Чехословакин çар влаçĕсен пĕлтерĕвне парать. Пĕлтерӳре çапла каланă: Словакире Врутки районĕнче темиçе кун лăпкă тăнă хыççăн тăшман пысăк вăйсемпе Св. Мартин еннелле наступлени пуçласа янă. Йывăр çапăçусем пыраççĕ. Çапăçусенче нимĕçсене йывăр çухатӳ кӳреççĕ. Нитр шывĕн улăхĕнче Чехословаки патриочĕсен оборони çирĕпленнĕ. Патриотсем темиçе çӳллĕ вырăна туртса илнĕ, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Ытти участоксенче улшăнусем пулман.

Финляндипе тунă перемири условийĕсем çинчен Англи журналĕ мĕн çырать

ЛОНДОН, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Эрнере пĕрре тухакан «Сектейтор» журнал Финляндипе тунă перемири условийĕсем çинчен çапла çырать: «Финляндипе перемири тунă пирки вăрçăран Германин тепĕр союзникĕ тухса ӳкрĕ. Вăл финсем хăйсем кĕтме пултарнă условисенчен çăмăлтарах условисемпе тухса ӳкрĕ. Финсем Совет Союзĕ мир тума сĕнни çине нумайчен ответ памасăр тăчĕç. Çавăнпа та Россия хăйĕн сĕнĕвĕсене каялла илпĕ пулсан, унтан пĕртте тĕлĕнмелле пулмасчĕ. Анчах та Румынипе калаçнă чухне те, Финляндипе калаçнă чухне те Россия вĕсене таврас шухăш палăртмарĕ. Халь йышăннă условисем март уйăхĕнче сĕннĕ условисенчен çăмăлтарах, Финлянди никама пăхăнман çĕршыв пулса юлать, унтан халь касса илекен территори Россиăна хăрушсăрлăх туса хума çеç кирлĕ пулмалла».

НИМĔÇСЕМ ИТАЛИ БАНКĔНЧЕН УНТИ ЫЛТТĂН ЗАПАСНЕ ТУРТТАРСА КАЙНĂ

РИМ, сентябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рима нимĕçсем оккупациленĕ вăхăтра Германи влаçĕсем, банкнотсемсĕр пуçне, Итали банкĕнчи 95 тонна ылттăна турттарса кайнă. Кунсăр пуçне, вĕсем Албани банкĕн Римра усранă икĕ тонна ытла таса ылттăнне илсе кайнă. Италин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ нейтральнăй тата туслă çĕршывсене дипломатиллĕ представительсем урлă çакăн çинчен пĕлтернĕ: Итали правительстви Итали ылттăнне каялла таврас тĕлĕшпе хăйĕн мĕнпур прависемпе усă курма шутлать, тенĕ.

«ДЕЙЛИ ГЕРАЛЬД» ХАÇАТ ГЕРМАНИРЕН ТАРАКАН НИМĔÇСЕНЕ ИСПАНИ ПУЛĂШНИ ÇИНЧЕН МĔН ÇЫРАТЬ

ЛОНДОН, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли геральд» хаçатăн корреспонденчĕ Суэффер юлашки вăхăтра çакăн пек хыпарсем час-часрах киле пуçлани çинчен çырать: Испание килекен гитлеровецсем нумайĕшĕ Аргентинăна каяс умĕн испанецсен хушамачĕсене йышăнаççĕ тата испанецсен паспорчĕсене туянаççĕ. Суэффер каланă тăрăх, Аргентинăна каякан нимĕçсем пуринчен ытла промышленниксемпе ытти çынсем, хăйсен капиталĕсене Аргентинăри банксене куçарнăскерсем. «Темиçе уйăх каялла,—тесе çырать Суэффер, — дипломатсем хушшинче çакăн пек хыпар сарăлчĕ: Франко хăйĕн нацистла тусĕсене паспортсем туса памашкăн фабрика туса хунă, теççĕ».

КĔСКЕН

* Çурçĕр Францире союзниксем нимĕçсен самолет-снарядсем вĕçсе хăпармалли 300 станцине ытла тытса илнĕ.

* Алжирта Совет Союзĕн Отечественнăй вăрçи виçĕ çул тултарнă ятпа выставка уçăлнă.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

ФИЛИППИН УТРАВНЕ СЫВЛĂШРАН ПЫРСА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен самолечĕсем, авианосецсем çинчен вĕçсе хăпарса, малтанхи хут Манила утравне тапăннă (Манила утравĕ—Филиппин утравĕсен ушкăнĕнче). Японин 11 суднине шыва путарнă, 205 самолетне пĕтерсе тăкнă. Унсăр пуçне, ишсе çӳрекен тиçĕ доксемпе икĕ баржăна пĕтерсе тăкнă. Япони самолечĕсем хирĕç тăнă пулин те, союзниксен самолечĕсем çав вăйлă çирĕплетнĕ района самаях сиенленĕ. Икĕ аэродрома çĕмĕрнĕ, Кавитэ ятлă тинĕс базине сиенленĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Хусанти ялхуçалăх институчĕ Уйхир факультечĕн тата Сад çимĕçĕпе Пахча-çимĕç факультечĕн 1-мĕш курсĕсене вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Институт пысăк квалификациллĕ уйхир агрономĕсене тата сад çимĕçĕпе пахча-çимĕç агрономĕсене вĕрентсе хатĕрлет.

Институтра 4 çул вĕренмелле.

Института вăтам шкултан вĕренсе тухнисене илеççĕ.

Вăтам шкултан отличник аттестачĕпе вĕренсе тухнисене экзаменсăрах илеççĕ, ыттисен физикăпа, химипе, вырăс чĕлхипе тата литературипе экзамен памалла.

Заявленипе пĕрле çак документсене ямалла: 1) автобиографи, 2) вăтам шкултан вĕренсе тухнине кăтартакан аттестат (аттестатне хăйне, копине мар), 3 фотокарточка.

Студентсене стипенди параççĕ, общежитие вырнаçтараççĕ; кунне виçĕ хут апат çитереççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Казань. п/о. 11, Ялхуçалăх институчĕ, Директору.

Тĕнчери лару-тăру

Фашистсем вăхăта хăвалаççĕ, вăхăт хăй вара вĕсене çава шăтăкнелле хăвалать. Гитлерла Германин пĕтес шăпи кунран кун çывхарса килет. Фашистла Германи «темиçе пин çуллăха» тунă Европăри «çĕнĕ йĕрке» ишĕлсе анчĕ. Гитлерăн Европăри «союзĕнчен» тĕрĕссипе.., ванчăкĕ кăна—Венгри кăна тăрса юлнă, анчах унăн пĕтес кунне те картса хунă ĕнтĕ. Ку вăл хăйне яланах Финляндипе «пĕр тăван» çĕршыв тесе каланă Венгри пулса тăрать. Çав икĕ çĕршыв хăйсем пуçарнă çаратусемпе вăрă-хурахла ĕçсен çулне вĕçне çитиччен пĕрле утса тухма ĕмĕтленнĕ. Анчах Финлянди фашистла блокран тухса ӳкрĕ. Ку ĕç сасартăках пулса иртмерĕ. Вĕсем пуçарнă вăйăра Финлянди хăй тӳпине тахçанах выляса янине тата малашне нимĕçсем майлă пулса вăрçни Финлянди çĕршывĕшĕн пĕтмелли ăссăр ĕç пулса тăнине ĕнентерме Гитлерăн çав «çирĕп» тарçине çирĕп уроксем кирлĕ пулчĕç.

Пирĕн çĕршывран çĕрсем касса илсе, «аслă Финлянди» тума тахçантанпах палăртса хунă плансенчен уйăрălма Финляндири власть тытса пыракан ушкăнсемшĕн, паллах, йывăр пулчĕ. Вăрçă вĕсене хытă кӳрентерчĕ. Финсен çарĕсем пире хирĕç çапăçакан фронт участокĕнче тăшман оборонине Хĕрлĕ Çар çапса аркатрĕ. Ку хутĕнче те Финляндин Совет Союзне хирĕç пуçласа янă авантюри хăйне хирĕçле пырса çапрĕ, Финлянди, поражени тӳссе, вăрçăран тухса ӳкрĕ.

Финляндипе перемири çинчен тунă Килĕшӳре Совет Союзĕн çурçĕр-хĕвеланăçĕнчи чиккисене тата пирĕн халăхшăн чи паллă хула пулса тăракан Ленин хулине, çавăн пекех ССР Союзĕ патне Балтикăпа Баренц тинĕсĕсем енчен пымалли вырăнсене хăрушсăрлатассине çирĕппĕн палăртса хунă. Çакă ĕнтĕ вăл Совет Союзĕпе Финлянди хушшинче 1940 çулхи мартăн 12-мĕшĕнче тунă Мирлĕ Договора çĕнĕрен ĕçе кĕртнипе, пирĕн çĕршыв ĕлĕкрех хăй ирĕкĕпе финсене панă Петсамо облаçне Совет Союзне каялла тавăрса панипе пурнăçа кĕрет. Кунсăр пуçне, Финлянди Порккала-Удд районĕнчи территорипе шыв талккишĕсене ССР Союзĕн аллине, тара памалли йĕрке тăрăх, 50 çуллăха парать. Çав вырăн вăл—Финн заливĕнчи чи ансăр вырăн пулса тăрать, унта пирĕн тинĕсçăр базы пулать.

Килĕшĕвĕн чылай условийĕсене чи паха задачăна — Германие хăвăртрах çапса аркатас задачăна пăхăнтарнă. Сентябрĕн 15-мĕшĕ хыççăн Финлянди территорийĕ çинче юлнă нимĕçсен хĕçпăшаллă вăйĕсене хĕçпăшалсăрлантарса тата вĕсен личнăй составне тыткăна лекнĕ çар çыннисем вырăнне хурса, Финляндин вĕсене союзниксен аллине памалла, Финляндири гитлерла организацисене тата пĕрлешнĕ нацисемшĕн тăшманла пулса тăракан ытти организацисене те салатса ямалла, вăрçăра тунă преступленисемшĕн айăплă çынсене тытса суд тăвас ĕçре Финляндин союзниксемпе пĕрле ĕçлемелле. Çавăн пекех тата Союзлă (Совет) Главнокомандовани хушнă тăрăх, Финляндин хăйĕн кăнтăр-хĕвеланăçĕнчи тата кăнтăрти çыранĕнчи аэродромĕсене Совет Союзĕн аллине памалла.

Килĕшӳре Финлянди пирĕн çĕршыва вăрçă ĕçĕсемпе тата хăшпĕр совет районĕсене оккупациленипе кӳнĕ çав тери пысăк тăкаксене, пĕтĕмĕшпе мар пулин те, тӳлеттермелле тăвассине пăхса хунă. Финлянди умне ытлашши йывăр требованисем лартманни Совет Союзĕн ырă та аслă кăмăлне татах та тепĕр хут кăтартса парать.

Перемири çинчен тунă Килĕшӳ Финляндин никама пăхăнманлăхне пырса тивмест, ССР Союзĕпе Финлянди хушшинче, çакă кӳршĕллĕ икĕ çĕршыв хушшинче, йĕркеллĕ çыхăнусем тума никĕс хывса парать. Çав çыхăнусем малалла мĕнле аталанса пырасси пĕтĕмĕшпех финсем перемири условийĕсене мĕнле пурнăçласа пынинчен тата вĕсем пирĕн çĕршыв çине мĕнле пăхнинчен килет.

Финлянди вăрçăран тухса ӳкни тата вăл перемири çинчен Килĕшӳ туни — гитлерла Германи вăрçăпа политика тĕлĕшĕнчен çав тери пысăк поражени тӳснине пĕлтерет. Германи çумĕнчен унăн чи çывăх союзникĕсенчен пĕри хăйпăнса ӳкрĕ. Çакна пула ĕнтĕ вăрçă пыракан çĕр талккишĕ пĕчĕкленет. Нимĕçсене кăнтăрта, Балканра тата хĕвеланăçĕнче тӳстернĕ пораженисемпе пĕрле вĕсене çурçĕрте те хăватлăн пырса çапни Германие хупăрласа тăракан тимĕр ункăна татах та ытларах хĕсет, фашистла тискер кайăка хăйĕн шăтăкне татах та шаларах хăваласа кĕртет.

* * *

Гитлерла Германи политика тĕлĕшĕнчен пысăк поражениссем тӳснĕ вăхăтра, унăн вăрçăри ĕçĕсем пĕтсе лармаллах ăнăçлă мар пулса пынă чухне, Хĕрлĕ Çар тунă çĕнĕ çĕнтерӳсем çинчен тата пирĕн союзниксен çарĕсем тăвакан çитĕнӳсем çинчен калакан хыпарсем татах та уçăмлăнрах илтĕнеççĕ. Совет çарĕсем Балтика тăрăхĕнче çĕнтерӳллĕ наступлени туса пыни хамăрăн çĕршыва оккупантсенчен пĕтĕмĕшпех тасатса çитерессине хăвăртлатать, фашистсене пуçĕпех çапса аркатассине çывхартать.

Гитлерăн Балканри стратегийĕпе политики путланса ларчĕ. Германи çумĕнчен унăн икĕ сателличĕ—Болгарипе Румыни хăйпăнса ӳкрĕç. Çав икĕ çĕршыв фашистсен йăвине кăнтăр-хĕвелтухăçĕнчен хӳтĕлесе тăнă кăна мар, вĕсем çавăнпа пĕрлех Германие пур тĕрлĕ апат-çимĕçпе чĕртавар та парса тăнă пулнă. Хĕрлĕ Çар Румыни çĕршывне нимĕç захватчикĕсенчен часах тасатса çитерет, халĕ ĕнтĕ Хĕрлĕ Çар Венгри алăкне пырса шаккарĕ.

Нимĕçсен Грецири авантюри те пĕтсе пырать. Гитлеровецсем хăйсен çарĕсене утравсем çинчен куçараççĕ, кăнтăрти Балканра хăйсен мĕнпур вăйĕсене пухаççĕ. Анчах та вĕсем унтан ниçта та тухса тарма пултараймĕç. Вĕсен Германие чакса каймалли çулĕсене татнă ĕнтĕ.

Фашистсем умне хĕвеланăçĕнчен хаяр хăрушлăх тухса тăчĕ. Франципе Бельги çĕршывĕсене ирĕке кăларнă. «Зигфрид линине» чылай çĕрте çĕмĕрсе пăрахнă. Союзниксен Çурçĕр Голландире антарнă авиадесант çарĕ çĕр çинчи çарсемпе пĕрлешнĕ те Германин чи паха облаçĕсем патне хаяр вăй пулса çитсе тăнă. Нимĕç обозревателĕсем халĕ ĕнтĕ час-часах Рейн шывĕ çинчи лини пирки калаçаççĕ, çакă вăл фашистла çарăн юлашки оборона рубежĕ пулса тăрать.

Германишĕн кунран-кун ытларах япăхланса пыракан çак лару-тăрура фашистла пропаганда тунă халлапсем пĕрин хыççăн тепри пĕтсе пыраççĕ. Германи çарне «çĕнтерекенни никам та çук» текен халлап тахçанах путланса ларнă ĕнтĕ. «Хĕвелтухăçĕнчи валсене никам та çĕмĕрсе кĕме пултараймасть» текен халлап та тĕтĕм пекех сирĕлсе кайрĕ. Хĕрлĕ Çар, хĕвеланăçнелле çĕнтерӳллĕ наступлени туса пырса, фашистсен çав халлапне кăна мар, вĕсен оборонин «валĕсене» те аркатса тăкрĕ. Халĕ ĕнтĕ гитлеровецсем «Зигфрид линине никам та татма пултараймасть» текен хăйсем тунă юмаха та хăйсемех тата вас-касах аркатаççĕ. Çапла вара вĕсем, фронт çав рубеж çинче те чарăнса тăмĕ тесе, нимĕç халăхне малтанах туйтарасшăн. Фашистсен вăрçă ĕçĕсене пăхса тăраканĕсем «Зигфрид линине» юлашки çулсенче пачах та çирĕплетмен тата вăл кивелсе кайнă тесе çыраççĕ.

Ĕç, паллах, кунта мар. Гитлерăн çав линие хӳтĕлеме салтаксем çук. Салтаксемсĕр тупăсем те, пулеметсем те пемеççĕ. Çавăн пекех Рейн шывĕ те, çарсемсĕр, Германие хирĕç çапăçакан çĕршывсен çарĕсемшĕн чăрмав пулса тăма пултараймасть. Нимĕçсем хăйсен тĕп вăйĕсене тата пур пек резервĕсене Совет Союзĕпе Германи фронтне—Хĕрлĕ Çара хирĕç янă. Союзниксен çарĕсене хĕвеланăçĕнче хирĕç тăма Германин питех те сахал вăй тăрса юлнă. Анчах хĕвелтухăçĕнче те гитлерла командовани нимĕнле çитĕнӳ те тăваймарĕ, вăл кунта поражениссем кăна тӳсет. Хĕрлĕ Çар çирĕппĕн те шанчăклăн хĕвеланăçнелле пырать.

Юлашки кунсенче Геббельс çĕнĕ халлап шухăшласа кăларнă: вăл халĕ, тотальнăй мобилизаци çине шанса, фашистла çĕршывăн «шалти хăватлă резервĕсем» çинчен калаçать. Анчах та çав тотальнăй мобилизаци гитлерла министр çав тери пысăк вăйсем пухса пама сăмах панине тӳрре кăлараймасть. Çавăнпа та вăл васкасах тепĕр юмах шухăшласа кăларать. Вăл «вăхăт факторĕ» çинчен суйăхать. «Пире вăхăт кирлĕ», тет вăл.

Геббельс çавăн çинчен ахаль мар суйăхать. Гитлеровецсем, хăйсен унчченхи вăрă-хурахла тусĕсем 1918 çулта хăтланнă пекех, Германи мĕншĕн поражени тӳснине халех тӳрре кăларма ĕмĕтленеççĕ. «Вăхăт çитмерĕ, вăхăт çитнĕ пулсан, резервсем те, çĕнĕ стратеги те тата ыттисем те тупăннă пулĕччĕç»,—тесе каласшăн вĕсем. Çак юмахпа усă курса, гитлерла пуçлăхсем, хăйсен ирсĕр пурнăçне мĕнле те пулин ытларах тăсас тата «нейтральнăй» çĕршывсенче фашизм йăвисене туса хурас, хăйсем валли пытанмалли вырăн тупас тесе, Германи халăхне вăрçăра татах та вăйлăнрах та çирĕпрех тăма мобилизацилесшĕн. Çак маневрсене нимĕçсен фашистла вăрă-хурахĕсем Германи поражени тӳснĕ хыççăн та хăйсем сыхланса юлас шутпа тăваççĕ.

Союзлă державăсем гитлеровецсене вăхăт памĕç. Фашистла Германие çапса аркатаççех, унăн мĕнпур вăрă-хурахла пуçлăхĕсене хаяр ответ тыттараççĕ. Фашизма пĕтерсе тăкаççĕ.

Я. ВИКТОРОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00707. Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.